25-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮЛЬ
30
КĔҪНЕРНИКУН
176(6111) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

Комҫомол тата тырпулсене пухса кĕртес ĕҫ

Хальхи хаяр кунсенче комсомолецсем фронтра паттăррăн ҫапăҫаççĕ, тылра тăрăшса ĕҫлеççĕ. Хастарлăхпа паттăрлăхăн примерне кăтартса, комсомолецсем союзра тăман ытти ҫамрăксене те хăйсем пек пулма вĕрентеççĕ.

Тылри комсомол организацийĕсем заводсен, фабрикăсен, чугунҫулсен, совхозсен, МТС-сен, колхозсен производство программисене тата планĕсене тултарассишĕн, фронта валли ытларах та ытларах хĕҫпăшал тата тырпул парассишĕн тăрăшса ĕҫлеççĕ. Комсомолăн колхозри организацийĕсем чылай ĕҫсене пуҫарса пычĕҫ. Вĕсем ялхуҫалăх машинисен пайĕсене пухас, машинăсене юсас, вăрлăхсене тасатас, ҫуракине ăнăҫлăн ирттерес енĕпе тимлĕн ĕҫлерĕҫ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухса «Социализмлă ялхуҫалăхĕн отличникĕ» значока илме тивĕҫлĕ пулнă 8 трактористка-стахановкăсенчен пĕри — комсомол вĕрентсе ӳстернĕ, халĕ ВКП(б) членне кĕнĕ Елена Кудрявцева. Вăл Шупашкар МТС-ĕн трактористки, ҫуракинчи ĕҫ планне 242 процент тултарнă. «Социализмлă ялхуҫалăхĕн отличникĕ» значокпа наградăланисем хушшинче Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн трактористкисем Дария Илюшкинăпа Ольга Быкова комсомолкăсем пур. Илюшкина юлташ ҫуракинчи ĕҫ планне 239 процент тултарнă, горючие 24,8 процент перекетленĕ. Быкова юлташ ĕҫ планне 207,1 процент тултарнă, горючие 14,6 процент перекетленĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 ҫулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуҫалăх продукчĕсене хатĕрлесси ҫинчен» йышăннă постановленине кашни колхозникпе колхозницăна, МТС-семпе совхозсенчи кашни рабочипе работницăна ăнлантарса парасси, ҫак постановлени пурнăҫа кĕртессине организацилесси — ялти комсомолецсен паян тумалли ĕҫĕ пулса тăрать. Ҫак постановление комсомолăн ялти организацийĕсен пурин те сӳтсе-явмалла.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолăн колхозсенчи, совхозсенчи, МТС-сенчи организацийĕсем патне тырпулсене пухса кĕртес тата ялхуҫалăх продукчĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе ĕҫлесси ҫинчен ҫыру янă. «ВЛКСМ Центральный Комитечĕ ҫапла шутлать: комсомолăн колхозсенчи, совхозсенчи, ялсенчи, МТС-сенчи организацийĕсемшĕн, ялти комсомолецсемпе комсомолкăсемшĕн халĕ тĕп задача — вăрçă вăхăтĕнчи тырпула вăхăтра, пĕр тăкаксăр, правительство палăртнă срокра пухса кĕртесси тата ялхуҫалăх продукчĕсене хатĕрлес плана вăхăтра тултарасси пулса тăрать. **Ялти комсомолецсен халĕ ҫак задачăран пысăкрах тата пахарах задача урăх ҫук. Ҫак задачăна татса пама пирĕн мĕнпур вăя пухмалла».**

Тырпулсене вăхăтра пухса кĕртесси, государствăн ялхуҫалăх продукчĕсем хатĕрлемелли планне тултарасси — вăрçăпа хуҫалăх тĕлĕшĕнчи чи пысăк задача пулнине, ҫак задачăна ăнăҫлăн пурнăҫа кĕртни нимĕҫсен фашистла захватчикĕсене хăвăртрах аркатса тăкма пулăшнине кашни комсомолецăн ăнланса илмелле. Ун ҫинчен ялхуҫалăхĕнче ĕҫлекенсене пурне те ăнлантарса памалла

Комсомолăн ялти организацийĕсен малти черетре тăракан задачи — социализмлă ăмăртăва анлăн сарасси, уборкăра ĕҫлекенсене пурне те ăмăртăва хутшăнтарасси.

Политикăллă ĕҫе уборкăна ăнăҫлăн ирттерес шухăшпа туса пымалла. Колхозсенче агитаторсем пулса ĕҫлекен комсомолецсем чылай. Вĕсен пурин те хăйсен ĕҫне юратса туса пырас пулать. Ялта массăсем хушшинче агитациллĕ ĕҫе туса пыма пултаракан активистсем сахал мар. Вĕсене калаҫусем ирттерме, стена хаҫачĕсем кăларма нумайрах хутшăнтармалла. Политикăллă ĕҫе кирлĕ пек организацилесе туса пымасăр уборкăна ăнăҫлăн ирттерме ҫук. Ҫакна асра тытса, комсомол организацийĕсен политикăллă ĕҫре партин пуҫламĕш организацисене практикăллă пулăшу парас пулать. Пуҫламĕш парторганизацисем ҫук колхозсенчи комсомол организацийĕсен политикăллă-массăллă ĕҫе лайăх йĕркелесе ярасси ҫине ытларах ҫавăрăнса пăхмалла. Комсомол организацийĕсен парти решенийĕсене пурнăҫа кĕртес тĕлĕшпе чăннипех те активлăн ĕҫлекен организаторсем пулса тăмалла.

Колхозсен пĕрремĕш тивĕҫĕ — государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăҫласси. Государствăна тырпулсене срокченех парса татассине организацилеме ялти комсомолăн пулăшмалла. Правительство кăҫал Хĕрлĕ Ҫар валли тырă фончĕ тума йышăнчĕ. Ҫак фонда тăвас ĕҫре комсомолецсем малта пулмалла.

Халĕ колхозсенче тата совхозсенче шкул ачисен отрячĕсем ĕҫлеççĕ. Нумай ҫĕрте ҫак отрядсене учитель-комсомолецсем ертсе пыраççĕ. Паллах, отряд ялхуҫалăхĕнче тăрăшса ĕҫлесси, унăн ĕҫ тухăҫлăхĕ пысăк пуласси ăна ертсе пыракан комсомолецран килет.

МТС-сенчи комсомол организацийĕсен трактористсемпе комбайнерсем хушшинче тăтăшах ĕҫлесе пырас пулать. Кашни тракторист, кашни комбайнер пĕтĕм вăя хурса ĕҫлетĕр, ĕҫ тухăҫлăхне ӳстерсе пытăр, уборка планне срокченех пурнăҫа кĕртме тăрăштăр.

Ҫĕршывпа фронта валли самолетсем, танксем тата ытти хĕҫпăшалсем мĕнле кирлĕ, ҫавăн пекех ҫăкăр та кирлĕ. Ҫакăнтан ĕнтĕ уборкăра ĕҫлекен комсомолецсемпе союзра тăман ҫамрăксем ҫĕршывăн паха та чыслă ĕҫне туса пынине лайăх курăнать. Комсомолецсен уборкăра чи ответлă участоксенче пулмалла. Вĕсен ҫакна асра тытас пулать: вĕсем ырми-канми, кунĕн-ҫĕрĕн ĕҫленипе ытти ҫамрăксене тата мĕнпур колхозниксене уборкăра тăрăшса ĕҫлеме хавхалантарса пырĕҫ. Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-сенчи рабочисемпе работницăсем: «авă, пирĕн комсомолецсемпе комсомолкăсем мĕн пек хастарлă ĕҫлеççĕ, пирĕн те вĕсенчен юлмалла мар», тесе калаччăр, тимлĕн, пĕтĕм вăйхала хурса ĕҫлеччĕр.

Комсомолăн ялти организацийĕсен колхозри усăллă ĕҫсене пуҫарса пымалла, уборкăна хăвăртрах ирттерес ĕҫре пуҫарулăх кăтартмалла.

ВЛКСМ райкомĕсемпе МТС политотделĕсен, ялти парторганизацисен комсомол организацийĕсене тĕреклетме тăрăшмалла, вĕсене ĕҫре пулăшмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 28-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ

Июлĕн 28-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче, ҫавăн пекех тата **Цымлянская, Батайск** районĕсенче хаяррăн ҫапăҫнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Фински заливра пирĕн карапсем противникăн виҫĕ транспортне путарнă, вĕсен водоизмещенийĕ пĕтĕмпе 19.000 тонна пулать.

* * *

Июлĕн 27-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаҫĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕҫсен 60 танкне, 5 бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине, горючи тултарнă 10 автоцистернине, боеприпассем тиенĕ 30 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 3 складне тата горючин 2 складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр полка ҫити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронежран кăнтăртарахри участокра пирĕн пĕр часть противник тăракан вырăна ҫĕмĕрсе кĕрсе кайнă та нимĕҫсем ҫирĕплетнĕ районра хаяррăн ҫапăҫать. Кӳршĕри участокра пирĕн боецсем малалла кусна, гитлеровецсене халăх пурăнакан темиҫе пунктран ҫапа-ҫапа кăлараççĕ. Ҫав ҫапăҫусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем пин ҫын ытла вилнĕ. Воронежран хĕвеланăҫнерех вырăнта нимĕҫсем танковăй атака тунă. Пирĕн артиллери персе вĕсене пысăк ҫухатусем кӳнĕ, вара нимĕҫсем хăйсен малтанхи позицийĕсем ҫине чакнă.

* * *

Цымлянская районĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç ҫапăҫнă. Пĕр тĕлте нимĕҫсем Дон шывĕн кăнтăр енне каҫса кайнă. Пирĕн чаҫсем таттисӳлмисĕр контратакăсем туса, противника каялла сирсе яма тăрăшаççĕ. Совет танкисчĕсем, нимĕҫ войскисем тăракан вырăна ҫĕмĕрсе кĕрсе кайса, 5 танк, 18 оруди пĕтерсе тăкнă, боеприпассем тиенĕ 10 автомашинăна ҫунтарса янă тата гитлеровецсене 200 ҫынна ытла вĕлернĕ.

* * *

Батайск районĕнче хаяр ҫапăҫусем пыраççĕ. Пирĕн чаҫсем гитлеровецсен умлăн-хыҫлăн тунă тăватă атакине сирсе янă. Противника пысăк ҫухатусем тӳстернĕ. Пирĕн артиллери нимĕҫсен 17 танкне тата противникăн пехотине пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Брянск фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаҫсем икĕ кун хушши ҫапăҫнă, ҫав ҫапăҫусенче икĕ енĕн те танксем нумай пулнă. Пирĕн гвардеец-танкистсем, ытти йышши войскăсемпе пĕр-пĕрне пулăшса ҫапăҫса, нимĕҫсен кунта кĕрешекен танковăй дивизине пысăк ҫухатусем тӳстернĕ. Нимĕҫсен 100 танкне ытла персе сиенленĕ тата пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсене халăх пурăнакан пĕр ҫирĕплетнĕ пунктран хăваласа кăларнă. Ку участокра пирĕн боецсем икĕ кун хушшинчи ҫапăҫусенче нимĕҫсенчен 12 танк, 28 оруди, 48 пулемет, 2 радиостанци, 7.000 снаряд тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Нимĕҫсен командованийĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта Хĕвеланăҫĕнчен пехотнăй дивизисемпе мотомехчаҫсемсĕр пуҫне, авиацине те куҫара-куҫара килет. Нумаях пулмасть 55-мĕш бомбардировочнăй эскадрăна, 3-мĕшпе 53-мĕш истребительнăй эскадрăсене тата ытти сывлăшсар чаҫĕсене те куҫарса килнĕ.

55-мĕш бомбардировочнăй эскадрăран тыткăна лекнĕ пилот, унтер-офицер Фриц Клайн ҫапла каласа панă: «Пирĕн эскадра юлашки вăхăтченех Францире тăчĕ. Юлашки вăхăтра пирĕн боевой вĕҫевсем пулманпа пĕрех. Июнь уйăхĕнче Францире, Бельгире тата Голландире тăракан войскăсемпе пĕрле пысăк маневрсем туса ирттерме палăртса хунăччĕ. Анчах та нимĕн кĕтмен ҫĕртен пирĕн эскадра тата хăшпĕр ытти эскадрăсем те вырăс фронтне вĕҫсе кайма приказ илчĕҫ». 53-мĕш истребительнăй эскадрăран тыткăна лекнĕ летчик, унтер-офицер Карл Корн ҫапла каласа панă: «Хĕвеланăҫĕнче хăшпĕр аэродромсенче пĕр боевой машина та юлмарĕ. Чылай вырăнсенче ку таранччен ĕҫленĕ ҫар аэродромĕсенчен, боевой самолетсем вырăнне макетсем туса лартса, суя аэродромсем туса хунă. Пĕр уйăх хушшинче пирĕн группа хăйĕн базине 5 хутран кая мар улăштарчĕ. Летчиксем кун пирки кула-кула, пирĕн группăна куҫса ҫӳрекенсем тесе ят пачĕҫ. Пире ҫапла калатчĕҫ: сире вырăнтан вырăна юри, противника улталаса пăтраштарса ярас шутпа куҫарса ҫӳреççĕ, тетчĕҫ. Анчах та каярахпа вара ҫапла куҫса ҫӳрекен группăсем нумайĕшĕ, ҫав шутра пирĕн группа та, Российйăна ҫитсе тăчĕҫ. «Удет» ятлă 3-мĕш истребительнăй эскадрăна та кунта Хĕвеланăҫĕнчен куҫарса килнĕ».

* * *

Нимĕҫсен фашистла захватчикĕсем Смоленск облаҫĕн Андреевски районĕнчи 47 яла ҫаратса тухса тĕппипех ҫунтарса янă. Гитлерла ирсĕрсем ҫав ялсенче мирлĕ халăха темиҫе ҫĕр ҫынна асаплантарса вĕлернĕ тата персе пăрахнă.

* * *

Винер-Нейштадт хулинчи (Австрия) авиаци заводĕнче взрыв пулнă. Вена хулин тулашĕнче синтетически бензин тăвакан заводра вăйлă пушар тухнă. Темиҫе цех тата горючи сунă складсем ҫунса кайнă. Нимĕҫ влаҫĕсем Австрири предприятисенче диверсисемпе саботажсем питех те ӳссе кайнине шикленсе палăртаççĕ.

* * *

Киселевский юлташ директор пулса тăракан завод фронт заказĕсене пурне те срокчен туса парса пырать. Ĕнер завод коллективĕ июль уйăхĕн программине тултарнă. Уйăх хушшинче ку завод хăйĕн продукцине пĕрмаях график тăрăх кăларса пынă.

Июлĕн 29-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июлĕн 29-мĕш ыран тенĕ чух ҫĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче, ҫавăн пекех тата **Цымлянская, Батайск** районĕсенче ҫапăҫнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Воронеж районĕнче ҫапăҫусем пынă. Ҫав ҫапăҫусенче нимĕҫсен фашистла войскисем пысăк ҫухатусем тӳсеççĕ. Пирĕн пехотăн пĕр соединенийĕ 10 кун хушшинче нимĕҫсен 10.800 салтакĕпе офицерне, 158 танкне, 28 самолетне, 88 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Нимĕҫсенчен 24 оруди, 90 пулемет, 14 миномент, снарядсем нумай тата ытти тĕрлĕ трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Гитлеровецсене хирĕç пыракан кĕрешӳре пирĕн боецсем пысăк тавçăрулăх кăтартаççĕ. Красноармеец-разведчик Кочкин юлташ противникăн телефон линине тупнă та, ун тăрăх йĕрлесе шуса пырса, нимĕҫсен штаб палатки патне пырса тухнă. Хастарлă боец ҫав палаткăна темиҫе граната ывăтса, 10 офицера пĕтерсе тăкнă. Старши сержант Костюченко нимĕҫсен кухни патне йăпшăнса пынă та, автоматран темиҫе черет персе ярса, нимĕҫсен 30 салтакĕпе пĕр офицерне вĕлернĕ.

* * *

Цымлянская районĕнче пирĕн войскăсем оборонăллă ҫапăҫусем туса пынă. Пирĕн бомбардировка тăвакан тата штурмлакан авиаци противникăн танкĕсемпе мотомехчаҫĕсене вăйлăн пырапыра ҫапнă. Пирĕн летчиксем пĕр кун хушшинче нимĕҫсен 36 танкне тата пехотăпа ҫар грузĕсем турттарса пыракан 106 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче нимĕҫсен 13 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Батайск районĕнче хаяр ҫапăҫусем пынă. Пирĕн боецсем противникăн наступлени тăвакан войскисене вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Ĕнер пĕр участокра нимĕҫсен 19 танкне ҫĕмĕрнĕ тата 1.100 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Нимĕҫсем ҫапăҫăва ҫĕнĕ вăйсем кĕртсе ярсан ҫеç пирĕн чаҫсем оборонăн тепĕр рубежĕ патне чакнă.

* * *

Брянск фронтĕнче пирĕн чаҫсем, противника хĕссе, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Фокин юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем халăх пурăнакан икĕ пунктăн хĕррисене йышăнса илнĕ те ҫав рубежра ҫирĕпленсе ларнă. Тепĕр участокра пирĕн чаҫсем активлăн ҫапăҫнă. Ҫав ҫапăҫусенче нимĕҫсен 1.200 салтакпа офицер вилнĕ е аманнă. Пирĕн артиллерипе минометсем противникăн артиллерин икĕ батарейине тата минометсен тăватă батарейине пусарса лартнă, 10 дзота ҫĕмĕрнĕ, противникăн пехотине пĕр батальона ҫити сапаласа янă.

* * *

Киев облаҫĕнчи партизансен Е. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕҫсен аэродромĕ ҫине пырса тапăннă. Унта 2 самолет ларнă. Партизансем аэродромăн хуралне вĕлерсе пĕтерсе, ҫав самолетсене тата бензин складне ҫунтарса янă.

* * *

Орел облаҫĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен В. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕҫсен боеприпассем турттарса пыракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр эрне хушшинче партизансем 106 оккупанта пĕтерсе тăкнă

* * *

Нимĕҫсен 9-мĕш танковăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Иозеф Б. ҫапла каласа панă: «Май уйăхĕнче пирĕн дивизие ҫынсем чылай хушса пачĕҫ. Ротăсенчи салтаксен шутне 120—140 ҫынна ҫитернĕччĕ. 33-мĕш танковăй полк 50 юсанă кивĕ танк тата вăрăм кĕпҫеллĕ ҫĕнĕ йышши тупăсем вырнаҫтарса лартнă 50 ҫĕнĕ танк илнĕ. Кунсăр пуҫне, дивизие тепĕр чаҫран танковăй батальон ярса панă. Икĕ эрне хушшинчи ҫапăҫусенче дивизин 100 танк ытла пĕтрĕ. Ҫынсем тĕлĕшпе те ҫухатусем питех те пысăк пулчĕҫ. 11-мĕш мотострелковăй полкăн 2-мĕш батальонĕнче салтаксен виҫҫĕмĕш пайĕ ҫеç тăрса юлнă. Ытти чаҫсемпе подразделенисенче те ĕҫ ҫавăн евĕрлех. Дивизие пуринчен ытла вырăссен артиллерийĕпе йывăр миномечĕсем пысăк ҫухатусем тӳстерчĕҫ».

* * *

Нимĕҫсен фашистла захватчикĕсем Смоленск облаҫĕнчи Сафоново районĕнчи Беленино, Холмчнка, Зализно, Курчебово, Левково ялĕсене тата Сафоново поселокне нимĕн юлмиччен ҫунтарса янă. Фашистла бандитсем ҫав ялсенче нумай хĕрарăмсемпе ачасене тата старриксене персе вĕлернĕ.

Юлташ, фронт умĕнче парăмлă пулар мар, Тырпулăн кашни килограмĕпе тăшмана ҫапар!

Тырă вырас ĕҫ пуҫланчĕ

КАЛИНИНО, июлĕн 29-мĕш. (**Телефонпа**). Районри 17 колхоз, уйрăм участоксене суйласа илсе, ыраш выраççĕ. Тырă вырас ĕҫ Киров ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Николаев) йĕркеллĕн пулса пырать. Ку колхоз уборкăна тухма тахçанах хатĕрленсе ҫитнĕ. Кашни бригадăн уборкăри ĕçсен планĕ пур.

Колхозăн пурĕ 514 гектар тĕштырă пуҫтарса кĕртмелле. Колхоз ăна 15 ĕҫкунĕ хушшинче пуҫтарса кĕртме шутлать. Жнейкăсем тата пĕр лобогрейка ĕҫе тухма хатĕр, ҫавăн пекех тата кĕреплеллĕ ҫавасемпе ҫурласене те ҫителĕклĕ таранах хатĕрленĕ. Кĕреплеллĕ ҫавасемпе тырă вырма звеносем организациленĕ.

Уборка вăхăтĕнче колхозра культурăллă-массăллă ĕҫ анлăн пулса пымалла; агитаторсене бригадăсем тăрăх ҫирĕплетсе тухнă. Колхозра тата бригадăсенче стена хаҫачĕсем тухса тăраççĕ. Колхозниксен пĕрлешӳллĕ столовăйĕ усăлнă тата ачасен площадкине организациленĕ.

Анчах та хăшпĕр колхозсенче ĕҫре ҫитменлĕхсем пурри палăрать. Калинино ялсоветĕнчи «Искра» колхоз жнейкăсене ҫирĕп юсаманни уборкăн малтанхи кунĕнчех палăрчĕ. Ыраш ку колхозра пĕтĕм лаптăкĕшпе пекех пулса ҫитнĕ. Анчах жнейкăсем, юсавлă мар пирки, чарăна-чарăна ҫеç ĕҫлеççĕ. Кунтах вырнă тырра вăхăтра ҫыхса пыманни те палăрать. Кĕлте ҫыхасси вырнинчен кая юлса пырать.

«Партизан» колхоз, тырă пиҫнине тĕрĕслесе тăман пирки, ыраш вырма каярах юлса тухрĕ. Ҫавăн пекех Сăкăт ялсоветĕнчи колхозсем те тырă вырма 2—3 кун каяраx юлса тухрĕҫ.

Тырăсене вырма ыран-паянах кашни колхозăнах массăллăн тухмалла пулать. Кăҫалхи уборкăра колхозсен нумай хут лайăхрах, тухăҫлăрах ĕҫлемелле. Ĕҫĕн пахалăхĕ пысăк пулмалла.

Ф. РОМАНОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Колхоз уборкăна организованно тухать

СĔНТĔР, июлĕн 28-мĕш. (**Телефонпа**). Районри «Колос» колхоз тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕҫре юлса пыни уҫҫăнах курăнса тăнă. Колхоза ҫийĕнчех пулăшу памалла пулнă. Ҫакна шута илсе, ВКП(б) райкомĕ Тямин юлташа колхоза ĕҫлеме ячĕ. Унччен Тямин юлташ ВКП(б) райкомĕнче инструктор пулса ĕҫленĕ. Колхозниксем Тямин юлташа кăмăл турĕҫ, ăна колхоза ертсе пыма суйларĕҫ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 ҫулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуҫалăх продукчĕсем хатĕрлесси ҫинчен» йышăннă постановленипе колхозниксем тĕплĕн паллашрĕҫ, умра тăракан задачăсене тарăн ăнланса илчĕҫ. Ҫакăн хыҫҫăн колхозра уборкăна хатĕрленес ĕҫ тĕпренех улшăнчĕ. Уборка вăхăтĕнчи ĕҫсен планне тунă чухне колхозниксем лайăх сĕнӳсем пачĕҫ, колхоз ĕҫ планне пур енчен те шутласа пăхса тĕплĕн турĕ.

Колхозра уйхир ĕҫ бригадисем пурĕ 5. Кашни бригада валли пĕрер жнейка тата пĕрер молотилка юсаса ҫирĕплетнĕ. Витнĕ итемсене тасатса юсанă, вĕсенче молотилкăсемпе тарасасене вырнаҫтарса лартнă.

Колхоз тырăсене ытларах машинăсемпе вырма тăрăшать. Ҫак вăхăтрах, тырăсене пĕр тăкаксăр пухса кĕртес шутпа уборкăра кашни ĕҫлеме пултаракан ҫынна активлăн ĕҫлемелле тунă. Тырăсене кĕреплеллĕ ҫавасемпе те выраççĕ. Кăна тума халĕ кашни бригада хăй валли кĕреплеллĕ ҫавасем вуншар хатĕрлерĕ. Вырнă тырра ҫийĕнчех ҫыхса, турттарса капана хывас тĕлĕшпе колхоз кашни лаша валлиех кӳлмелли хатĕрсем, урапапа вĕренсем хатĕрлерĕ. 103 михĕ ҫĕнĕрен ҫĕленĕ, киввисене сапласа юсанă, 369 ҫурла шăлласа хунă.

Колхоз тырă вырма хатĕр тăрать. Тырă участокĕсене сăнаса тăракан постсем лайăх ĕҫлеççĕ. Вĕсем тырăсем пулса пынине те сăнаса тăраççĕ тата колхоз тыррине вут-кăвартан тимлĕн сыхлаççĕ. Уборка вăхăтĕнче пĕрлешӳллĕ столовăйсем кашни бригадăрах пулаççĕ. Июлĕн 1-мĕшĕнчен ĕҫлеме пуҫланă ача яслинче пурĕ 95 ача пурăнаççĕ. Яслине колхоз икĕ вырăнта организациленĕ, колхозницăсене унта хăйсен ачисене леçсе пама инçе мар.

Колхоз утă ҫулас ĕҫе пысăк ҫĕкленӳпе туса ирттерчĕ, ăна пысăк пахалăхпа пухса капансене хывра. Государствăна утă парса татнă тата 41 центнер тĕштырă панă.

АЛЕКСЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Укҫа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейи

13.330.000 тенкĕлĕх вырнаҫтарнă

Республикăра укҫа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене вырнаҫтарас ĕҫ малалла пырать. Июлĕн 30-мĕш тĕлне вĕсене рабочисемпе служащисем хушшинче 2.779.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 10.551.000 тенкĕлĕх, пĕтĕмпе 13.330.000 тенкĕлĕх вырнаҫтарнă. Укҫине 8.779.000 тенкĕ пухнă.

Лотерея билечĕсене вырнаҫтарас ĕҫре малтанхи кунсенчи пекех Йĕпреҫ, Вăрнар тата Шăмăршă районĕсем юлса пыраççĕ. Юлашки кунсенче Хĕрлĕ Чутай районĕнче лăпланса ларма пăхни палăрать.

Партипе совет тата финанс органĕсен билетсене вырнаҫтарас ĕҫе ăнăҫлăн вĕҫлессишĕн тăрăшнипе пĕрлех вĕсен укҫине пухассишĕн кĕрешес пулать.

АКТИВ ПРИМЕР КĂТАРТАТЬ

ВĂРМАР, июлĕн 28-мĕш. (**Телефонпа**). Ҫĕнĕ лотерея билечĕсене паянхи кун тĕлне колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 503 пин тенкĕлĕх, рабочисемпе служащисем хушшинче 38 пин тенкĕлĕх вырнаҫтарнă. Укҫине 355 пин тенкĕ пухнă.

Билетсене илме ҫырăннă укҫине «Хĕрлĕ Мăрат» колхоз членĕсем 15.050 тенкĕ, «Хĕрлĕ Ҫăлтăр» колхоз членĕсем 15 пин тенкĕ тата Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 9 пин тенкĕ вĕске вăхăтрах пухса пачĕҫ.

Лотерея билечĕсене вырнаҫтарас ĕҫре ялти актив лайăх пример кăтартать. «Маяк» колхоз председателĕ Турдушев юлташ 2 пин тенкĕлĕх, бригадир А. Турдушева, кладовщик Москвкин тата тимĕрҫĕ Кучерук юлташсем пиншер тенкĕлĕх ҫырăнчĕҫ. Вĕсем укҫине те ҫийĕнчех тӳлерĕҫ.

«Ҫĕнĕ пурнăҫ» колхоз бригадирĕсем И. Денисов, А, Яковлева, В. Павлов юлташсем кашни 850 тенкĕлĕх, икĕ фронтовикăн амăшĕ, колхозница М. Петрова юлташ 560 тенкĕлĕх, красноармеец арăмĕ А. Смирнова юлташ 300 тенкĕлĕх ҫырăнна.

Чăрăш Ҫырма ялсовет секретарĕ Е. Семенов юлташ лотерея билечĕсене уйăхри ĕҫукçин 176 проценчĕ чухлĕ, ялсовет председателĕ Ф. Герасимова юлташ уйăхри ĕҫукçи чухлĕ илме ҫырăнна.

Г. КРЮЧКОВ,
ВКП(б) райком секретарĕ.

УКҪИНЕ ТЕ ПУХАҪҪĔ

КАЛИНИНО, июлĕн 29-мĕш. (**Телефонпа**). Районра ҫĕнĕ лотерея билечĕсене сарнă вăхăтрах укҫине те пухаççĕ. Паянхи куна пурĕ 448.500 тенкĕ пухнă. Ҫак ĕҫре Юнтапа, Уйкас Юнтапа ялсоветĕсенчи колхозсем тата Кăкшăм ялсоветĕнчи «Ĕҫ ялавĕ» колхоз малта пыраççĕ. Ҫав вăхăтрах Катекпе Астакасси ялсоветĕнчи колхозсенче ҫак тĕлĕшпе ҫителĕксĕр ĕҫлеççĕ.

Ф. Р.

Уборкăра нумай хут лайăхрах ĕҫлер

ПЕРВОМАЙСКОЕ, июлĕн 29-мĕш. (**Телефонпа**). Паян район утă ҫулса пухас ĕҫе пĕтĕмĕшпех вĕҫлерĕ. Каярах юлнă колхозсем юлашки купасене капана хывса ҫитерессишĕн хĕрсех ĕҫлеççĕ.

Колхозсен уйхирĕсенче ыраш пулса ҫитсе пырать. Ыран районри чылай колхозсем уйрăм вырăнсене суйласа илсе ыраш вырма тухаççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 ҫулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуҫалăх продукчĕсем хатĕрлесси» ҫинчен йышăннă постановлени тĕп вырăна хурса, район уборкăна тĕплĕн хатĕрленчĕ. Паянхи куна районĕпе 78 жнейка юсаса хунă, 10 косилкăна тырă вырмалла туса майлаштарнă, кĕреплеллĕ ҫавасем 2.700 туса хатĕрленĕ. Уборка вăхăтĕнчи ĕҫсен планне кашни колхозрах тунă, вĕсене пăхса тухса ҫирĕплетнĕ. Районри 92 витнĕ итемрен 90-шне юсаса тасатса хунă. Жнейкăсемпе тата молотилкăсемпе ĕҫлекен машинистсем хатĕрлекен курсран 62 ҫын вĕрентсе кăларнă.

Паянхи куна ача яслисем 29 колхозра, пĕрлешӳллĕ столовăйсем 33 колхозра организациленĕ.

Колхозниксен ĕҫлес хастарлăхĕ пысăк. Кĕрхи тырра район 8 ĕҫкунĕ хушшинче, ҫурхи тырра 9 ĕҫкунĕ хушшинче пĕтĕмĕшпех вырса пухма палăртнă.

И. РОМАНОВ.
Райҫĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Обязательствăсене срокчен тултараççĕ

ҪĔРПУ. Районри колхозсемпе колхозниксем фронт валли тырпул, аш-какай, пахча-ҫимĕç кирлĕ чухлĕ тата вăхăтра пама тăрăшаççĕ. «Заря» колхоз государствăна 1942 ҫулшăн аш-какай памалли плана тултарнă. Жданов ячĕпе тăракан колхоз 1942 ҫулшăн государствăна ҫĕрулми 13 центнер панă, аш-какай планне тултарнă. Лапра-Кушки ялсоветне кĕрекен «Родина» колхоз государствăна 1942 ҫулшăн аш-какай памалли плана тултарса, 1943 ҫулшăн та 9 пăт панă. Аванс шучĕпе 1942 ҫулшăн 16 центнер тĕштырă панă. «Совет» колхоз та государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултарма тăрăшать. Ку колхоз аванс шучĕпе 24 центнер тĕштырă панă тата 1942 ҫулти 1, 2, 3-мĕш кварталсемшĕн аш-какай памалли плана тултарнă.

М. ЯКОВЛЕВ,

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Вăйлă çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 28-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Халĕ Воронеж районĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Фашистсем хăйсен сайралса юлнă дивизийĕсене çапла çынсемпе хуша-хуша параççĕ, вĕсене урăхла йĕркелеççĕ, пирĕн атакăлакан чаçсене хирĕç вăйлăн персе тăраççĕ. Тем чухлĕ тĕлте нимĕçсем авиацине усă кураççĕ. Бомбардировщиксемпе истребительсем пирĕн çапăçу йĕркисене пыра-пыра тапăнаççĕ.

Енер Воронежран кăнтăрарах выртакан пирĕн чаçсем фашистсен оборона линине икĕ тĕлте татнă. Вăрман хушăкĕсенче тата халăх пурăнакан пысăк пункт çывăхĕнче юнлă çапăçу пуçланса кайнă. Противникăн 1.000 çын ытла вилнĕ е аманнă. Красноармеецсем противник патне хăвăртлăн çывхарса, штык вĕççĕн тăрса вирлĕн атакăласа, çапăçура çиеле тухма тăрăшаççĕ.

Пирĕн авиаци тăшмана кунран кун хытăрах та хытăрах пыра-пыра çапать. Совет летчикĕсем пирĕн подразделенисене хӳтĕлеççĕ, тăшманăн укрепленийĕсене çапа-çапа аркатаççĕ, унăн çыхăнăвĕсене пăсаççĕ. Енер пирĕн летчиксем тăшманăн 3 самолетне пĕтерсе тăкнă, 3 самолетне пирĕн çĕр çинчи войскăсем персе ӳкернĕ. Кунсăр пуçне, пирĕн летчиксем нимĕçсен 5 танкне, 40 автомашинине, 4 бензозаправщикне пĕтерсе тăкнă, боеприпассен 4 складне сирпĕнтерсе янă, артиллерин икĕ батарейине тата 3 зенитнăй точкăна пусарса лартнă.

Нимĕç захватчикĕсем çапăçăва венгерсене хăваласа кĕртеççĕ. Тыткăна лекнĕ çынсем нумайĕшĕ каланă тăрăх, фашистсем венгерсен хыçне пулеметсем вырнаçтарса лартаççĕ, каялла чакма хăтланакан кашни венгера персе вĕлерессипе хăратаççĕ.

Воронеж районĕнчи вăйлă çапăçусем кăнтăрла та, çĕрле те лăпланмаççĕ.

Г. КРЫЛОВ.

Фашистсен Дон тăрăхĕнчи тискер ĕçĕсем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 28-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Пусмăрлани, çаратни, мирлĕ граждăнсене мăшкăллани—акă мĕн кăтартаççĕ гитлеровецсем совет Донне. Фашистла бандитсен ури ăçта ярса пуснă—унта виселицăсем, персе вĕлерни, выçлăх, унта стариксемпе хĕрарăмсем тата ачасем калама çук хытă асапланаççĕ. Старый Оскола тытса илнĕ малтанхи кунах фашистсем çав хулан тĕп урамĕсенче — Октябрьскипе Центральнăй урамсенче виселицăсем туса лартнă. Фашистла тамăкран тарса хăтăлма ĕлкĕреймен çынсене хăратмашкăн унта 11 совет граждăнĕн вилли икĕ эрне хушши çакăнса тăнă. Çакса вĕлернисем хушшинче шкулта 5-мĕш класра вĕренекен икĕ ача —Павел Курносовпа Николай Васильев пур. Бандитсем вĕсене фашистсене кӳршĕри яла кайма çул кăтартманшăнах çакса вĕлернĕ. Гитлеровецсем вăл хулара хăйсем хуçаланнă малтанхи эрнерех 36 çемьене персе вĕлернĕ, кăкăр ĕмекен ачасене те шеллесе тăман. Фашистсем Анастасия Петровна Изюмовăна унăн хăйĕн ывăлĕн виçĕ çулхи хĕрĕпе Лидăпа пĕрле касса вĕлернĕ. Старый Оскол вăл халь—виле хули, нимĕçсем ăна асаплантармалли питĕ пысăк тĕрме туса хунă. Енер боецсем фашистсен тепĕр тискер ĕçĕ çинчен пĕлнĕ. Наблюдатель Богуславский, фашистсен позицийĕсене тимлĕн асăрхаса тăрса, гитлеровецсен малти линийĕ патĕнче хĕрарăмсемпе ачасен пысăк ушкăнне курнă. Красноармеец фашистсем енче мĕн тунине тата хытăрах сăнама тытăннă. Пăртак вăхăт иртсен çакă паллă пулса тăнă: гитлеровецсем, атакăна кайма хатĕрленсе, хăйсен чаçĕ умне мирлĕ çынсене тăратса тухнă иккен. Меллĕ маневрсем туса илсе, пирĕн боецсем гитлеровецсене çав хĕрарăмсемпе ачасенчен татса илнĕ те фашистла ирсĕрсем çине вăйлăн пеме тытăннă. Нимĕçсен усал шухăшĕ вара пурнăçа кĕреймен. Фашистла тыткăнран тарса килнĕ Таисия Волкова нимĕçсем пирĕн совет хĕрĕсене мĕнле мăшкăллани çинчен каласа панă. Июлĕн 19-мĕшĕнче Гнездилово ялĕнче гитлеровецсем 18 хĕре тытнă та, вĕсене Дон хĕррине илсе кайса, унта ирсĕррĕн мăшкăллама тытăннă. Хĕрсем кăшкăрнине, йынăшнине Дон шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче тăракан боецсем илтнĕ. Вĕсем вара нимĕçсем çине пеме тытăннă. Фашистсем ялтан яла çӳресе халăха çаратаççĕ, тискеррĕн мăшкăллаççĕ. Ващеватка ялĕнче гитлеровецсем мĕнпур выльăха пусса пĕтернĕ, хресченсенчен мĕнпур апат-çимĕçе тытса илнĕ. 12 пӳрте çунтарса янă, çав пӳртсенче пурăннă çемьесене пĕр çын юлмиччен вĕлерсе пĕтернĕ. Касторнăйра фашистсем мĕнпур хĕрарăмсемпе хĕрсене медицина енчен пăхма пухнă, унтан вара 40 çынна ытла аскăнчăк çуртне ăсатнă.

Гитлеровецсем тытса илнĕ ялсемпе хуласенчен Германие апат-çимĕçсене (тырпа, аш-какая) çеç мар, хресченсемпе хулари çынсен хăйсен япалисене те илсе каяççĕ. Фронт линийĕ урлă пирĕн пата çитнĕ хыпарсем тăрăх, фашистсем пĕр районран кăна çавăн пек çаратнă япаласене 450 вагон тиесе ăсатнă.

Дон тăрăхĕнчи ялсемпе хуласенче нимĕçсем тăвакан питех те тискер ĕçсем совет воинĕсен хаярлăхне вунă хут ӳстерсе яраççĕ, партизансен çапăçăвĕн çулăмне ытларах ялкăштараççĕ.

Г. КРЫЛОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. **Ӳкерчĕк çинче:** гвардин старши сержанчĕ Г. Арапов командир пулса тăракан зенитнăй пулемет расчечĕ пирĕн батарея çине пикировка тăвакан бомбардировщиксене перет. Тĕл перекен зенитчиксем Н. хули патĕнче фашистсен 9 самолетне персе ӳкернĕ.

Д. ЧЕРНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Обязательствăна пурнăçларăмăр

Шупашкарти механически арман коллективĕ пĕр уйăх каялла апат-çимĕç промышленность предприятийĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнчĕ, виççĕмĕш кварталта ĕç планне уйăхсерен 110 процент тултарма обязательство илчĕ. Коллектив халĕ çак обязательствăна чыслăн пурнăçласа пырать, июль уйăхĕнчи плана 29 кун хушшинче 110 процент тултарчĕ. Юлашки икĕ кунра обязательствăран иртерсе продукци паратпăр.

Рабочисенчен ăмăртура Ивановпа Мартяшев мельниксем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем хăйсен ĕç нормисене пĕрмаях иртерсе тултараççĕ, производствăри йĕркелĕхпе тасалăхшăн кĕрешеççĕ.

С. КЛОЧКОВ.
Механически арман директорĕ.

* * *

Шупашкарти промкомбинат ку уйăхра иртнĕ уйăхринчен лайăхрах ĕçлерĕ. Шăвăçран япаласем тăвакан цех июль уйăхĕнчи плана 29 кун хушшинче 140 процент тултарчĕ. Цех коллективĕ васкавлă заказсене те вăхăтра та ытлашшипех пурнăçларĕ. Июль уйăхĕнчи ăмăртура бригадир Зарецкий, рабочисем Медельман, Сниткин юлташсем тухăçлă ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен нормисене кашни кун 150-шар процент тултарса пычĕç.

Н. КОЧУБИЕВСКАЯ.

ВИÇÇĔМĔШ КВАРТАЛТА ЛАЙĂХРАХ ĔÇЛЕТ

Милютински механизациленĕ вăрман пункчĕн коллективĕ, иккĕмĕш квартал планне касас, турттарас, çавăн пекех тата çурас, юхтарас енĕсемпе ăнăçлăн тултарса, халĕ, виççĕмĕш кварталта, татах та лайăхрах ĕçлеме тăрăшать.

Виççĕмĕш кварталта рабочисем хăйсен ĕç тухăçлăхне палăрмаллах ӳстерчĕç, двухсотниксен ретне çĕнĕрен çĕнĕ çынсем хутшăнаççĕ. Степановпа Каталишев шоферсем июнь уйăхĕнче нормăна 150 процент тултарнă, июльре 200 процент тултараççĕ. Вăрман касакан Шаметдинов, Фасхутдинов, Низамов, йывăçсене тиесе пушатса тăракансем Сафин, Шелуха, Холодов юлташсем пĕрмаях икшер норма тултарса ĕçлеççĕ. Черепанов, Иванов тата Егоркин лавçăсен ĕç тухăçлăхĕ те вĕсеннинчен кая мар.

Коллектив хăйĕн ĕçне вăйлатсах пырать.

М. С.

БУИНСК РАЗ"ЕЗДĔНЧЕ

ЙĔПРЕÇ. Социализмлă ăмăртура Буинск разъездĕнчи рабочисем хăйсен ĕçне лайăхлатса пыраççĕ. Вырăнти вагонсен простойне июнь уйăхĕнче пĕтĕмпе пекех пĕтерчĕç. Июль уйăхĕнче те вагонсене вăхăтра йышăнса вăхăтра ăсатаççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Макаров дежурнăй аван ĕçлет. Вăл стрелка хуçалăхне те юсавлă тытать. Исаевпа Уткин дежурнăйсем ĕçре Макаров юлташăн примерĕпе усă кураççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче разъездра хĕрачасем ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем хăйсен специальноçĕсене лайăхлатасшăн тăрăшаççĕ. Коровенковăпа Николаева хĕрачасем, сăмахран, стрелочницăран станци дежурнăйне вĕренсе тухрĕç. Çак ĕçе Изулинăпа Яковлева юлташсем те вĕренеççĕ.

Д. М.

Рабочисем çар ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ

Сталин юлташ пире пĕтĕм ĕçе фронт интересĕсене пăхăнтарма, фронта кулленех пулăшса пыма, çар ĕçне лайăх вĕренсе çитме чĕнет. Аслă çулпуçăн кăтартăвне пирĕн большевикла пурнăçа кĕртсе пырас пулать.

Çĕмĕрлери комбинатра рабочисен, инженерсемпе техниксен кашни подразделенийĕнчех занятисем вăхăтра тата организованно иртеççĕ. Занятисене сиктерсе çӳрекен е кая юлса пыракан çукпа пĕрех. Подразделенисем тата уйрăм боецсем хушшинче социализмлă ăмăрту саралсах пырать. Юлашки вăхăтра уйрăмăнах Тополев юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени лайăх результатсем кăтартать. Ку подразделенири боецсем пур дисциплинăсемпе те «отлично» тата «хорошо» паллăсем илеççĕ, тактикăлла занятире пурте «отлично» паллă илчĕç. Кунта боецсем хушшинчи дисциплина çирĕп. Нумаях пулмасть занятисене лайăх ирттернĕшĕн ку подразделенин командирне Тополев юлташа тата политрук Шустов юлташа райвоенкомат тав турĕ.

Комбинатри паллă стахановец-двухсотник Уточкин юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени те вĕренӳре паха результатсем кăтартать. Вăл та иртнĕ тактикăллă занятире «отлично» паллă илчĕ.

Çар ĕçне вĕренес тĕлĕшпе стахановецсем пример кăтартаççĕ. Столяр А. Волков, фрезеровщик Е. Пантелеймонов, слесарь А. Кузайкин, Е. Николаев, Б. Веденеев юлташсем вĕренӳрен пĕрре те юлман, пур предметсемпе те «отлично» паллă илеççĕ. Вĕсем хăйсене занятисенче чăн-чăн боецсем пек тытаççĕ.

Столяр В. Шиганов, слесарь Линевич, токарь Шачков винтовкăран тĕл перессипе «отлично» паллă илчĕç. Кун пек рабочисем кашни подразделенирех пур.

Халĕ, пирĕн Хĕрлĕ Çар боецĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçнă вăхăтра, пирĕн рабочисен хастарлăхĕ, вĕсен çар ĕçне вĕренес ĕмĕчĕ татах та ытларах ӳсет. Вĕсем çар ĕçне тĕплĕн вĕренме пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшаççĕ.

П. АНИСИМОВ.
Çĕмĕрле комбинатĕнчи всевобуч подразделенийĕн командирĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли — ăшă туммирсем

ВĂРНАР. Кĕçĕн Кипекри «Память Ленина» колхозăн членĕсем ăшă туммирсем пухас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ.

Колхозри комсомолец Аркадий Данилов, производствăра ĕç нормине 200 процент таран тултарса пыраканскер, совет воинĕсем валли пĕр тир тата 400 грамм çăм парса, çапла каларĕ:

— Гитлерла ирсĕрсене хирĕç паттăррăн çапăçакан боецсем хушшинче манăн пичче те пур. Эпĕ паракан çак пĕчĕк пулăшу тăшмана çапса аркатакансене ăшă тумлантарнă çĕре кайтăр. Çĕршыв чĕнсен, эпĕ хам та тăшмана хирĕç çапăçма каятăп.

Колхозница М. Зябликăвăн упăшки фронтра. Зябликова юлташ пĕрер мăшăр чăлха тата алшиш пачĕ. Вăл çапла калать:

— Эпĕ тăшмана пĕтĕм чĕререн курайман. Ирсĕр тăшмана хирĕç манăн ушăпка кĕрешет. Фронтра пирĕн красноармеецсем паттăррăн кĕрешни çинчен илтсен эпĕ савăнатăп. Вĕсене ытларах та ытларах пулăшас килет.

Колхоз членĕсем чылайĕшĕсем ăшă япаласем пачĕç.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Ют çĕршывсенче

Америкăри общественность Финляндие хирĕç вăрçă пуçлама ыйтать

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 26-мĕш. (ТАСС). «Совет Союзĕпе çыхăну тытас тĕлĕшпе ĕçлекен Америкăри совет» (Америкăри обществăллă организаци) çыру пичетлесе кăларнă. Çав çыру урлă Америкăри паллă обществăллă деятельсем пĕтĕмпе 337 çын США президентĕнчен Рузвельтран «США тата мĕнпур пĕрлешнĕ çĕршывсем çĕнтерессине хăвăртлатас шутпа» Финляндие хирĕç халех вăрçă пуçлама ыйтнă, мĕншĕн тесен Финляндия Америкăн союзникне — Совет Союзне хирĕç Германи майлă пулса вăрçать.

Çыру çине конгресăн Иллинойс штатĕнчен суйланă членĕ Сабат, Коннектикут штачĕн губернатор заместителĕ Шепард, писатель Драйзер, полковник Раймонд Робинс (1917 çулта Россире Америкăн Хĕрлĕ Хĕрес обществин миссине пуçпулса ертсе пынăскер), çĕр-шыв руда промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен союзĕн председателĕ Робинсон тата профсоюзпа обществăн ытти паллă деятелĕсем те алă пуснă.

Совет Белоруссийĕ оккупантсен ури айĕнче

ЖЕНЕВА, июлĕн 27-мĕш. (ТАСС). Германин оккупациллĕ влаçĕсем Белорусси ССР-ĕнче çавтери пысăк йывăрлăхсемпе тĕл пулнă пирки шиклеççе ӳкнине гитлерла хаçатсем пытарайман. «Локаль Анцейгер» хаçат йышăннă тăрăх, Белоруссин хулисемпе ялĕсем юхăнса пĕтсе пушанса юлнă. Минск, Могилев, Витебск хулисем ишĕлчĕк кăна.

Хаçат çакна палăртать: оккупантсем паянхи куна çитсе, пĕр предприятие те ура çине тăратма пултарайман. Алăсталăх производстви те пĕтĕмĕшпех пăчланса ларнă.

Çакнашкал лару-тăру вырăнти халăх нимĕçсемпе ĕçлеме кăмăлламаннинчен те килнине гитлерла хаçат пытараймасть. Халăх хуласенчен пăраха-пăраха тухса каять, вĕсем ытларах та ытларах пушанса юлаççĕ. Ремесленниксенчен пĕр пайне, — тесе çыратĕ хаçат, — «административллĕ йĕркепе» артельсене кĕртнĕ, анчах та «çав артельсем паянхи куна çитсе те продукци памаççĕ».

Белоруссири шкулсене пурне те хупса лартнă, учительсене арестленĕ е хăваласа янă, мĕншĕн тесен, çав хаçат каланă тăрăхах, «учительсем Германия ыйтнă пек вĕрентме юрăхсăр». «Минскра виçĕ нимĕç шкулĕ ĕçлет, — тесе пĕлтерет хаçат. — Вĕсенчен чи пысăккинче 36 ача вĕренет».

Вырăнти халăх çĕнĕ влаçпа «килĕштерсе» ĕçлеме кăмăлламан пирки гитлерла хаçат хытă ӳпкелешет. «Хуласемпе ялсенче управлени органĕсем тума май çук», мĕншĕн тесен, уйрăм сутăнчăксемсĕр пуçне, старостăсемпе бургомистрсен тата ыттисен вырăнне никам та йышăнасшăн мар.

ХОРВАТИРИ ХАЛĂХ ПĂЛХАННИ

СТАМБУЛ, июлĕн 28-мĕш. (ТАСС). Кунта илнĕ сведенисем тăрăх, Хорвати королевстви текен Загреб округĕнчи халăх хушшинче вăйлă хумханусем пуçланнă.

Нумай ялсенче хресченсемпе усташсен отрячĕсем хушшинче юнлă тытăçусем пулса иртнĕ. Хăшпĕр вырăнсенче хресченсем халăх сучĕсен приговорĕсем тăрăх Павеличăн сутăнчăкла «правительствин» представителĕсене перепере пăрахнă. Пĕтĕм округра вăрçăллă положени туса хунă. Халăха каçхине 11 сехетрен пуçласа ирхине 5 сехетчен урама тухма чарнă.

Югослави партизанĕсен кĕрешĕвĕнчен тата халăх пăлханнинчен хăраса ӳкнĕ пуканелле правительсем хăйсен çарĕн речĕсене васкасах ӳстереççĕ. Унта православи тĕнне тытакансене çара илесси çинчен пĕлтернĕ те ĕнтĕ. «Кăмăлсăр» халăха хирĕç кĕрешме Павелич июнь уйăхĕн вĕçĕнчех-ха, усташсен полицийĕсĕр пуçне, жандармсен уйрăм корпусне тума тытăннă. Халĕ халăха пĕр хĕрхенӳсĕр юнлă терррорпа хăратма хăтланса, Павеличăн правительстви приказ кăларнă. Çав приказра уйрăм партизансен кĕрешĕвĕшĕн пĕтĕм ответлăха пĕр-пĕр хулапа район сине хурасси çинчен каланă.

ВЕНГРИ ХАЛĂХĔН ТАРĂХĔВĔ ӲСЕТ

СТАМБУЛ, июлĕн 28-мĕш. (ТАСС). Венгрирен килекен хыпарсем вăрçă çине тата вăрçă кӳрекен асапсем çине тарăхни массăллăн ӳссе пынине кăтартса параççĕ. Ĕç тухăçлăхĕ хыттăн чакса кайни мĕнпур хуçалăха çавтери пысăк сиен кӳрет. Германие хирĕçле шухăш-кăмăлсемпе тата ӳссе пыракан саботажла ĕçсемпе кĕрешме Венгри влаçĕсем террорăн çавтери тискер мерисене ĕçе кĕртеççĕ.

Апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен çĕршыври лару-тăру хăвăрттăн япăхса пырать. Снабжени лайăхланассине кĕтме çуккине правительствăн ирĕксĕрех йышăнма лекет.

Выçлăхпа хĕнхура пула çĕршывра чир-чĕрсем анлăн сарăлаççĕ, вилекенсен йышĕ ӳсет. Пичетре пĕлтернĕ тăрăх, Будапешт шкулĕсенче тĕрĕсленĕ 2.145 ачаран çурри ӳпке туберкулезĕпе чирлĕ.

Египетри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Англи войскисем июлĕн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтăн сурçĕр секторĕнче тăшманăн позицийĕсене атакăлама тытăннă. Енер çав атакăран çапăçусем пуçланса кайнă. Çапăçусенче артиллери вăйлăн персе тăнă тата авиаци те хутшăнса кĕрешнĕ.

Июлĕн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин тата Америкăн сывлăшçар вăйĕсен бомбардировщикĕсем Тобрук çине йышлăн вĕçсе пырса вăйлăн тапăннă. Заливран çурçĕр-хĕвеланăçнерех вырăнта вăйлă пушарсем тухни паллă пулнă. Июлĕн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Тобрука каллех атакăланă. Тобрук портĕнче, ĕнерхи каç пекех, вăйлă пушарсем тухни тата взрывсем пулни палăрнă.

ГИММЛЕР БЕРЛИНРА ВУТ ТĔРТСЕ ПУШАР КАЛАРНА ÇЫНСЕНЕ ШЫРАТЬ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 28-мĕш. (ТАСС). «Стокгольмс тидининген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, гестапо начальникĕ Гиммлер Берлинра вут тĕртсе пушарсем кăларнă çынсене тытма кирлĕ сведенисем паракана 20.000 марка укçа пама пулнă. Çав хаçатра çырнă тăрăх, Берлинта юлашки вăхăтра пысăк çуртсенче кашни каç тенĕ пекех пушарсем тухнă. Полици шухăшĕпе, çав пушарсем «халăх хушшинче пăлхавсем кăларма кăтăлланакан» çынсем вут тĕртнипе тухнă.

ПАВЕЛИЧ СТОЛИЦИНЕ ЗАГРЕБ ХУЛИНЧЕН КУÇАРНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕш. (ТАСС). Загреб округĕнче пăлхавсем пулса пынă пирки Павелич Хорват королевстви тенкĕскерĕн столицине Загреб хулинчен Баня—Лука хулине куçарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Вагонсем юсакан заводри çамрăксем

Вĕсенчен нумайĕшĕ производствăна вăрçă кунĕсенче килнĕ. Вĕсене ĕçе хăнăхма çăмăл пулман. Шухăшĕсемпе темиçе норма тултарасшăн хыпса çуннă çак çамрăксем, анчах чылайĕшĕ малтанхи кунсенче пĕрер норма та тултарайман. Производствăри тухăçлăха сирсе яма, умри йывăрлăхсене çĕнме вĕсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту пулăшрĕ.

Завод Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнсан, кашни комсомолец тата союзра тăман çамрăк хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илнĕ.

«Ĕç нормине тултармасан пĕр комсомолец та ан пултăр!» — çакăн пек лозунгпа ăмăртма тытăннă ремонтно-механически цехри çамрăксем. Ун чухне кунти çамрăксем хушшинче ĕç нормине тултарайманнисем те пулнă. Май уйăхĕнче кăйсем тĕллĕн ĕçлеме тытăннă токарьсем Лучининовпа Черняев ĕç нормине 70 проц., Якушев — 58 процент, Стушинский — 50 процент çеç тултарнă. Цехри комсомол организацин секретарĕ Рита Рутте юлташ, цех конторинче счетовод пулса ĕçлекенскер, çамрăк токарьсем кулленех мĕн чухлĕ ĕçленине тĕплĕн пĕлсе тăнă. «Çук, вăрçă кунĕсенче кун пек ĕçлени килĕшмест. Пулăшас пулать вĕсене, камăн та вĕсемпе пĕрле ĕçлеме цеха куçас пулать»—çапла шутланă вăл. Шутланă — тунă. Патриотка часах станок умне тăнă. Пĕррехинче çамрăксене пулăшас ыйтупа Рутте цех начальникĕ Суперфин юлташ патне пынă.

— Комсомолецсем ĕç нормине тултараймаççĕ, — тенĕ вăл.

— Пĕлетĕп. Сирĕн сĕнӳсем?

— Эпĕ смена мастерĕсемпе Остроменскийпе Миронов юлташсемпе каласса килĕшрĕм. Вĕсем çамрăксене пулăшма квалификациллĕ рабочисем уйăрма пулчĕç. Ку ĕçе халех тытăнасчĕ...

— Килĕшетĕп, — тенĕ начальник, — эпĕ вĕсене хам сичен кăтартусем парăп.

Ăмăртăвăн малтанхи уйăхĕнче ĕç самаях ӳсанчĕ. Квалификациллĕ рабочисем пулăшса пынипе çамрăк токарьсем станоксем çинче ĕçлеме хăнăхса çитрĕç. Июль уйăхĕнче Лучининов лайăхрах ĕçлерĕ. Вăл уйăхри плана 167 процент тултарчĕ, Черняев—156 процент, Якушев — 137 процент тултарчĕç. Малтан çур норма тултаракан Стушинский те июль уйăхĕнче планран иртерсе 6 процент чухлĕ продукци туса кăларчĕ. Рутте юлташ та двухсотница пулса тăчĕ.

Çамрăксем çĕнĕ професси тупрĕç. Вĕсем халĕ токарь ĕçне пысăк тимлĕхпе туса пыраççĕ. Вĕсене халĕ сложнăй станок пăхăнакан пулчĕ. Токарь станокĕ! Ун çинчен вĕсем виç тăвати уйăх каярах шкулта учительсем каласа панине çеç илнĕ.

Заводри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. 100 çамрăк ытла стахановецсемпе ударниксен ретне тăчĕç. Чи маттуррисем — тысячник Юраков, пятисотник—Иван Демьянков, куллене 3—4 норма тултаракан Н. Скрыпник, Волкова, Ковалева юлташсем çинчен заводра пурте мухтаса калаççĕ.

Вăрçă кунĕсенче заводра комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисене, фронтовой станокĕсене организациленĕ. Вĕсенчен Чернухинпа Чесов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем ик-виçшер кун хушши цехран тухмасăр фронт заказĕсене пурнăçланă çĕрте ĕçлеççĕ.

Канашри вагонсем юсакан завод июнь уйăхĕнче лайăх ĕçлерĕ. Вăл СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн завочĕсем хушшинчи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Ăна июнь уйăхĕнчи çитĕнӳсемшĕн СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн Хĕрлĕ ялавне панă. Ку çитĕнӳре комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен ĕçĕ те усăн курăнать. Заводра халĕ ĕç нормине тултарайман пĕр комсомолец та çук.

ВЛКСМ заводри комитечĕ халĕ комсомолецсем умне çĕнĕ лозунг лартрĕ: «Кашни комсомолец—двухсотник пултăр!» Çак задачăна пурнăçласа пынă май, июль уйăхĕнче малтанхи çирĕм кунталăхра чылай комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем ик-виçшер норма тултарса ĕçлеме тытăнчĕç. Механически цехри строгальщик Вотяков июлĕн 20-мĕшĕнче ĕç нормине 423 процент тултарчĕ. Токарьсем Катранов, Ямбеков юлташсем тăтăшах сменăра виçшер норма тултараççĕ.

ВЛКСМ заводри комитечĕ производствăра лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекен 15 комсомолеца ВКП(б) членĕн кандидачĕсене кĕме рекомендаци панă, июлĕн 25-мĕш тĕлне вĕсенчен 13-ĕшне ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ. Вĕсем хушшинче — комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисене ертсе пыракансем Чесов, Чернухин юлташсем, паллă стахановка Мотузенко, тимĕр-тăмăр цехĕн комсоргĕ, çав цехăн мастерĕ Харлампиди, Наливайко, Немельман юлташсем. Кунсăр пуçне 1942 çулта 59 çамрăка комсомол ретне илнĕ.

Анчах заводри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем тунă çак çитĕнӳсем — малтанхи çитĕнӳсем кăна-ха. Çавăнпа вĕсемпе лăпланса лармалла мар. ВЛКСМ заводри комитечĕн (комитет секретарĕ Г. Павловский юлташ) социализмлă ăмăртăва татах та вăйлăнрах ертсе пымалла, малта пыракан çамрăксен ĕç опытне мĕнпур рабочисем патне çитерес тĕлĕшпе куллен-кун вăйлăн ĕçлемелле, агитациллĕ-массăллă ĕçе тĕпрен вăйлатмалла. Заводри комсомолецсемпе çамрăксен XVIII-мĕш партконференцин решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле.

П. НИКОЛАЕВ.

КАНАШ, («Чăваш Коммуни» корр).

ФЗУ Чебоксарской хлопчато-бумажной фабрики

объявляет набор подростков не моложе 16 лет с образованием не ниже 4-х классов в группы:

1) ткачей,
2) съемщиц на ватерах.

Срок обучения 3½ месяца.

Учащиеся обеспечиваются стипендией, хлебными карточками и питанием в столовой фабрики.

За справками обращаться в канцелярию школы: ул. Володарского, дом № 5 (Дом печати), 2-й подъезд, 2-й этаж, ежедневно кроме общевыходных дней.

3—3. Зав. ОПК.

При Чувашском сельскохозяйственном институте с 1-го августа 1942 года

ОТКРЫВАЮТСЯ КУРСЫ

по подготовке к экзаменам лиц, окончивших средние школы до 1941 года, а также по подготовке лиц, не имеющих законченного среднего образования, к сдаче ими в 1942 году экстерном экзаменов за курс средней школы с целью приема их после этого в ВУЗ без экзаменов.

Обучение на курсах бесплатное. Курсанты обеспечиваются общежитием и столовой.

ДИРЕКЦИЯ ИНСТИТУТА.

3—2.

ЧУВАШСКАЯ КОНТОРА «ГЛАВКИНОПРОКАТ»

получила и выпускает на экраны республики новый звуковой художественный фильм

Маскарад

По произведению М. Ю. Лермонтова.
Постановка режиссера-орденоносца С. Герасимова.
В главных ролях: Арбенин — народн. арт. Н. Мордвинов.
Нина — арт. Т. Макарова.
Баронесса Штраль — арт. С. Магарилл и др.

Производство Ленинградской Ордена Ленина киностудии «Ленфильм».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 583 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.